25-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 НОЯБРЬ 15 ВЫРСАРНИКУН 267 (6202) №

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ЧӐВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ

Вулав ҫурчӗсемпе клубсен ӗҫне—ҫӳлӗ пусӑма

Колхозлӑ ялсенче—политикӑллӑ тата производствӑллӑ пысӑк ҫӗкленӳ. Юратнӑ Сталинӑн ҫулӑмлӑ сӑмахӗсем кашни колхозникпе колхозницӑна, ватӑ старикпе карчӑка ҫӗнӗ вӑй-хӑват хушса пАраҫҫӗ. Ял халӑхӗ, социализмлӑ хуласенчи, шахтӑсемпе рудниксенчи тата совхозсенчи мӗнпур ӗҫҫыннисем пекех, ҫулпуҫӗн доклачӗпе приказӗнчен тухса тӑракан задачӑсене пурнӑҫлама ҫӗкленчӗ.

Ҫак историллӗ паллӑ кунсенче вулав ҫурчӗсемпе клубсене ялти агитациллӗ тата культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫӗн чӑн-чӑн боевой штабӗсем туса хумалла, вӗсем ӗҫҫыннисене ҫӗнӗ ҫӗнтерӳсем тума пӗр вӗҫӗмсӗр хавхалантарса тӑччӑр.

Малта пыракан вулав ҫурчӗсемпе клубсем ҫавӑн пек ӗҫлеҫҫӗ те. Вӑрмар районӗнчи «Трактор» колхозӑн вулав ҫуртне каҫсеренех темӗн чухлӗ халӑх пухӑнать. Колхозниксем уйхирте, итем ҫинче, фермӑра кункаҫа ӗҫленӗ хыҫҫӑн Совет Союзӗнчи ҫӗнӗ хыпарсемпе тӗнчери лару-тӑру ҫинчен пӗлме вулав ҫуртне пыраҫҫӗ. Агитатор-патриотка, вулав ҫурчӗн заведующийӗ коммунистка Марфа Иванова вӗсене ырӑ кӑмӑлпа кӗтсе илет, Совет Информаци Бюровӗн пӗлтерӗвӗсемпе, отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ фрончӗсенчи боевой эпизодсемпе, хамӑрӑн земляксен фронтри мухтавлӑ ӗҫӗсемпе паллаштарать. Унта яланах кирек-мӗнле ыйту ҫинчен ыйтса пӗлме, кӑмӑла килекен кӗнекесене илсе вулама пултаратӑн.. Колхозник киле таврӑнсан вулав ҫуртӗнче илтни-пӗлни ҫинчен хӑйӗн кил-йышне тимлӗн каласа кӑтартать. Ҫапла майпа агитаторӑн витӗмлӗ сӑмахӗсем Пысӑк Енкасси ялӗн кашни кил-ҫуртнех хӑвӑрттӑн сарӑлаҫҫӗ.

Яла Сталин юлташӑн доклачӗпе приказӗ пичетленнӗ хаҫатсем пырса ҫитсенех Иванова юлташ вулав ҫурчӗн активне—ялти учительсене, ялсовет исполкомӗнче тата колхоз правленинче ӗҫлекенсене канашлӑва пухнӑ.

— Сталин юлташӑн доклачӗпе приказне пирӗн кашни колхозник патне ҫитермелле,—тенӗ вӑл вӗсене докладпа паллаштарнӑ хыҫҫӑн,—ҫавӑнпа сирӗн кашни бригадӑна, фермӑна, колхозниксен килӗсене ҫитес пулать.

Вулав ҫурчӗн заведующийӗнче тӑватӑ ҫул хушши ӗҫлесе Иванова юлташ ялти вулав ҫуртне чӑн-чӑн боевой агитпункт туса хунӑ. Вӑл хӑйӗн ӗҫне юратать. Ҫӗршыври кашни паллӑ событи ҫинчен унти колхозниксем вӑхӑтра пӗлсе тӑраҫҫӗ. Ҫавӑн пекех Комсомольски районри Кивӗ Мӑрат ялӗнчи, Йӗпреҫ районӗнчи «Коминтерн» колхозри вулав ҫурчӗсем те начар мар ӗҫлеҫҫӗ.

Анчах ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫлекен вулав ҫурчӗсемпе библиотекӑсем тата колхоз клубӗсем те чылай-ха. Партипе комсомолӑн хӑшпӗр организацийӗсем тата районсенчи ҫутӗҫ пайӗсем ҫак питех те ответлӑ ӗҫ ҫине тимсӗррӗн пӑхаҫҫӗ. Ҫавӑнпа вулав ҫурчӗсем чылайӗшӗ хупӑ тӑраҫҫӗ, е вӗсенче нимӗнле ӗҫ те туса ирттермеҫҫӗ.

Пирӗн республикӑра пурӗ 621 вулав ҫурчӗ. Чӑваш АССР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссариачӗн Политпросвет ӗҫӗн Управленийӗн начальникӗ Медведев юлташ пӗлтернӗ тӑрӑх, ҫав вулав ҫурчӗсенчен чылайӗшӗ хӑйсен ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑчӗ ыйтнӑ пек йӗркелесе ярайман-ха. Вӑрнар районӗнче, сӑмахран, 17 вулав ҫуртӗнчен 5 вулав ҫурчӗн ҫеҫ заведующийӗсем пур. Ытти вулав ҫурчӗсем, вӑл шутра Кӗмӗл-Ямашри вулав ҫурчӗ 1942 ҫулхи сентябрь уйӑхӗнчен вара, Кӑмашри вулав ҫурчӗ кӑҫалхи январь уйӑхӗнчен вара хупӑ тӑраҫҫӗ. ВКП(б) райкомӗпе райсовет исполкомӗ колхозсенчи культурӑпа ҫутӗҫ учрежденисен ӗҫӗсем хӑйсем тӗллӗн пулса пырасса шанса пурӑннӑ. Вӗсем вулав ҫурчӗсен заведующийӗсене кулленхи ӗҫре пулӑшса пыман, ҫавӑнпа чылай юлташсем вулав ҫурчӗсене ертсе пырас ӗҫрен хӑтӑлма тӑрӑшнӑ. ВКП(б) райкомӗн кадрсен отделӗ, районри ҫутӗҫ пайӗ ҫак факт ҫине тимсӗррӗн пӑхнӑ, ӗҫ дисциплинине ҫирӗплетес тӗлӗшпе кирлӗ мерӑсене вӑхӑтра йышӑнман. Районри вулав ҫурчӗсене хӗле хатӗрлеме те тытӑнманпа пӗрех. Эртеменкассинчи тата Уравӑшри вулав ҫурчӗсем валли ҫуртсем ҫук. Кӗмӗл-Ямашра вулав ҫурчӗ кӑмакасӑр, хӑшпӗр вулав ҫурчӗсен чӳречисем ҫӗмрӗк, пӳрт ҫийӗсем шӑтӑк, вулав ҫурчӗсем валли ҫителӗклӗ таран вутӑ хатӗрлемен. Районри вулав ҫурчӗсенче кӗнекесен фончӗ чухӑн. 1942 ҫулта хӑшпӗр вулав ҫурчӗсен библиотекисем ҫӗнӗ кӗнекесем пачах илмен.

Ялти халӑхӑн культурӑллӑ тата политикӑллӑ пӗлӗвне ӳстерес ыйту ҫине ҫакнашкал ответсӑр пӑхнине, вулав ҫурчӗсем ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫленине малашне тӳссе тӑма ҫук. ВКП(б) Вӑрнар райкомӗпе райсовет исполкомӗн ҫакӑнтан халех тивӗҫлӗ вывод тумалла.

Уйхир ӗҫӗсем вӗҫленнӗ май, халӗ ӗнтӗ ялсенчи культурӑллӑ тата агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫсене вулав ҫурчӗсемпе клубсенче анлӑн сарса яма май пур. Колхозниксен малашне пушӑ вӑхӑтсем ытларах пулаҫҫӗ. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑн хыпарӗсене пӗлме, ҫӗнӗ хаҫатсене вулама, агитаторсемпе чуна чӗререн калаҫма вӗсем хапӑл тусах вулав ҫурчӗсене ҫӳреме пултараҫҫӗ. Пирӗн задача — вулав ҫурчӗсене, клубсене хӗл вӑхӑтӗнче ӗҫлеме хатӗрлесе ҫитересси. Вӗсенче яланах ӑшӑ, ҫутӑ тата культурӑллӑ пултӑр, унта ҫӗнӗ хаҫатсемпе журналсем вӑхӑтра килсе тӑччӑр. Вулав ҫурчӗ, клуб, библиотека — агитациллӗ тата массӑллӑ ӗҫсен чӑн-чӑн вучахӗсем пулса тӑччӑр.

ВКП(б) райкомӗсен, районри ҫутӗҫ пайӗсен, вулав ҫурчӗсен ӗҫне тивӗҫлӗ пусӑма лартас пулать. Республикӑри мӗнпур вулав ҫурчӗсене, клубсене, библиотекӑсене йӗркеллӗ ӗҫлекен тӑвас пулать. Избачсене тупса вӗсене кулленхи ӗҫре вӗрентсе, пулӑшса пырас пулать, вулав ҫурчӗ тавра ялти интеллигенцине — учительсене, агрономсене тата медицина работникӗсене явӑҫтармалла. Вулав ҫуртне илемлетес ӗҫре шкул ачисем те пысӑк пулӑшу пама пултараҫҫӗ.

Вулав ҫурчӗсемпе клубсен ӗҫӗшӗн, вӗсене ертсе пыракан кадрсене тупса парассишӗн чи малтанах районсенчи ҫутӗҫ пайӗсем ответлӑ. Анчах вӗсенчен чылайӗшӗ халӗ ҫак ответлӑха туймаҫҫӗ-ха. Ҫутӗҫ учрежденийӗсем начар ӗҫленине вӗсем час-часах «избачсем ҫитменнипе» ӑнлантарса пама пӑхаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтрах хӑйсем РСФСР Ҫутӗҫ Халӑх Комиссарӗ Потемкин юлташ малта пыракан учительсене, шкулта ӗҫленипе пӗр вӑхӑтрах, избачсем пулма лартасси ҫинчен кӑларнӑ приказа пурнӑҫламаҫҫӗ. Хӑшпӗрисем «учительсем избачсем пулса ӗҫленӗрен шкулта ӗҫлес ӗҫӗн пахалӑхне чакараҫҫӗ», тесе сӳпӗлтетеҫҫӗ. Ҫак йывӑр кунсенче хӑйӗн ӗҫне шкулӑн тӑватӑ стенийӗ хушшинче ҫеҫ туса пыракан, ҫамрӑк ӑрӑва коммунистла воспитани парассине ялти ӗҫҫыннисемпе ҫыхӑнса туса пыман учитель вӑл — начар учитель. Тепӗр енчен халӗ вулав ҫурчӗсен ӗҫне ертсе пыма кашниех пултараймасть. Культурӑллӑ, пурне те пӗлекен, ӗҫҫыннисен ыйтӑвӗсем ҫине тулли ответ пама пултаракан избач ҫеҫ авторитетпа усӑ курма пултарать. Ҫавӑнпа избачсем пулма чи лайӑх учительсене хӑюллӑнах лартас пулать. Ку ӗҫре вӑтам шкул пӗтернӗ ҫамрӑксемпе те усӑ курмалла.

Ҫак задачӑсене пурнӑҫа кӗртсен эпир вулав ҫурчӗсемпе клубсене ялти агитациллӗ тата культурӑллӑ-массӑллӑ ӗҫсен чӑн-чӑн штабӗсем туса хума, вӗсене вӑрҫӑ вӑхӑчӗ ыйтнӑ пек ӗҫлеттерме пултаратпӑр тата вӗсене ҫавӑн пек ӗҫлеттермелле те.

ЧӐВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМӖН УКАЗӖ

М. Д. Егоров юлташа Чӑваш АССР Вырӑнти Промышленность Халӑх Комиссарӗ пулма уйӑрса лартасси ҫинчен

Михаил Данилович **Егоров** юлташа Чӑваш АССР Вырӑнти промышленность Халӑх Комиссарӗ пулма уйӑрса лартас.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. АНДРЕЕВА.

Чӑваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Секретарӗн ӗҫӗсене тӑваканӗ

А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули. 1942 ҫулти ноябрӗн 14-мӗшӗ.

ВЦСПС-па СССР Наркоммясомолпромӗнче

Профессиллӗ Союзсен Пӗтӗм Союзри Центральный Совечӗпе СССР Аш-какай тата Сӗт-ҫу промышленность Халӑх Комиссариачӗ предприятисемпе хатӗрлев организацисен Пӗтӗм Союзри социализмлӑ ӑмӑртӑвӗн 1942 ҫулти октябрь уйӑхӗнчи итогӗсене пӑхса тухнӑ.

ВЦСПС-па СССР Наркоммясомолпромӗ пирӗн Чӑваш республикинчи Етӗрнери ҫу заводне виҫҫӗмӗш премии пама йышӑннӑ.

Америкӑри Ассошиэйтед пресс агентствин корреспонденчӗн ыйтӑвӗсем ҫине И. В. Сталин юлташ панӑ ответсем

Америкӑри Ассошиэйтед пресс агентствин Мускаври корреспонденчӗ Кэссиди господин ноябрӗн 12-мӗшӗнче ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗн Председателӗ И. В. Сталин юлташ патне ҫыру янӑ, ҫав ҫырура вӑл Америкӑри общественноҫа интереслентерекен виҫӗ ыйту ҫине ответ пама ыйтнӑ.

И. В. Сталин юлташ Кэссиди господина ҫакӑн пек ҫыру ярса ответленӗ:

„Г-н Кэссиди!

Эсир ноябрӗн 12-мӗшӗнче панӑ ыйтусем ҫине ответлетӗп:

1. „Совет енӗ союзниксен Африкӑри кампанине мӗнле хаклать?"

Ответ. Совет енӗ ҫак кампание уйрӑмах палӑрса тӑракан питех те паха факт тесе, союзниксен хӗҫпӑшаллӑ вӑйӗсен ӳссе пыракан хӑватне кӑтартса паракан тата Италипе Германи коалицийӗ ҫывӑх вӑхӑтрах саланса каяс перспективӑна уҫакан факт тесе хаклать.

Англипе Америка руководителӗсем вӑрҫӑ тӗлӗшпе пысӑк кампани организацилеме пултараймаҫҫӗ тесе скептиксем ҫирӗплетсе каланине Африкӑри кампани татах тепӗр хут сирсе ярать. Нимӗн иккӗленмелли те ҫук, океан урлӑ кайса Ҫурҫӗр Африкӑра ӑнаҫлӑн десант антарни пек, Касабланкӑран пуҫласа Бужи таранах портсемпе пысӑк территорисене хӑвӑрт йышӑнса илни пек тата Хӗвеланӑҫ пушхирӗнче итальянецсемпе нимӗҫсен войскисене ӑстан аркатса пыни пек вӑрҫӑ тӗлӗшӗнчи пысӑк операцисене чи лайӑх организаторсем кӑна пурнӑҫа кӗртме пултарнӑ.

2. „Совет Союзӗ ҫине хӗссе пырассине вӑйсӑрлатас тӗлӗшпе илсен ҫак кампани мӗнле усӑ парать тата Совет Союзӗ малашне мӗнле пулӑшу кӗтет?"

Ответ. Совет Союзӗ ҫине тӳрремӗнех хӗссе пынине вӑйсӑрлатас тӗлӗшпе ҫак кампани мӗн чухлӗ пулӑшни ҫинчен калама халӗ иртерех-ха. Анчах та ҫакӑн пирки шанчӑклӑнах калама пулать: пулӑшу пӗчӗккӗ пулмасть тата Совет Союзӗ ҫине хӗсесси килес ҫывӑх вӑхӑтрах хӑшпӗр таран вӑйсӑрланӗ.

Анчах, ҫапах та, ӗҫ кунта ҫеҫ мар-ха. Ӗҫ пуринчен малтан акӑ мӗнре. Африкӑри кампани пуҫарулӑх пирӗн союзниксен аллине куҫнине пӗлтернӗ пирки, вӑл Европӑри вӑрҫӑпа политика тӗлӗшӗнчи лару-тӑрӑва Англипе Совет Союзӗ тата Америка коалицийӗшӗн усӑллӑ туса тӗпренех улӑштарать. Вӑл тӗнӗл государствисен системинче ертсе пыракан вӑй пулса тӑракан гитлерла Германин авторитетне хавшатать тата Гитлерӑн Европӑри союзникӗсене арпаштарса ярать. Вӑл Франције чӗмсӗр лару-тӑруран кӑларать, Францири Гитлера хирӗҫле вӑйсене мобилизацилет тата французсен Гитлера хирӗҫле ҫарне организацилеме никӗс туса парать. Вӑл Италие стройран кӑларма тата гитлерла Германие тӑр-пӗччен тӑратса хӑварма условисем туса парать. Юлашкинчен, вӑл Европӑри иккӗмӗш фронта Германин пурнӑҫ центрӗсен ҫывӑхнерехре организацилеме майсем туса парать, ҫакӑ вара гитлерла тирание ҫӗнтерес ӗҫе организациленӗ ҫӗрте татӑклӑ вырӑн йышӑнса тӑрӗ.

3. „Совет Союзӗ Хӗвелтухӑҫӗнче наступлени тунин вӑйӗ татӑклӑ ҫӗнтерӗве хӑвӑртлатас тӗллевпе Хӗвеланӑҫӗнче союзниксемпе пӗрлешме пултарас майсем мӗнле?"

Ответ. Иккӗленме кирлӗ мар, Хӗрлӗ Ҫар хӑйӗн задачине, вӑрҫӑ пынӑ пӗтӗм вӑхӑтра пурнӑҫа кӗртсе пынӑ пекех, чыслӑн пурнӑҫа кӗртӗ.

Сире хисеплесе

И. СТАЛИН.,

1942 ҫулхи ноябрӗн 13-мӗшӗ".

Совет Информаци Бюровӗнчен

Ноябрӗн 13-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 13-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑну та пулман.

* * *

Ноябрӗн 12-мӗшӗнче пирӗн авиаци фронтӑн тӗрлӗ участокӗсенче войскӑсемпе грузсем тиенӗ 50 автомашинӑна ҫити тата пӗр поезда ҫӗмӗрнӗ, артиллерин 4 батарейине пусарса лартнӑ, противникӑн пехотине икӗ рота таран сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сталинград районӗнче ҫаплах хаяр ҫапӑҫусем пынӑ. Пирӗн войскӑсем противникӑн йышлӑ атакисене сирсе янӑ, ӑна чылай пысӑк сухатусем тӳстернӗ. Хулана хӳтӗлекенсем совет ҫӗрӗн кашни пусӑмне хӑйсен пурнӑҫне шеллемесӗр хӳтӗлесе тӑраҫҫӗ. Старшина Трушкин ертсе пыракан 12 боец нимӗҫ ротин 3 атакине сирсе янӑ. Совет боецӗсен ҫав ушкӑнӗ 4 сехет хушшинче тӑшманӑн пехотине икӗ взвод таран пӗтерсе тӑкнӑ, хӑйсем нимӗнле ҫухату та тӳсмен. Заводсен районӗнче Н-ски чаҫӑн боецӗсем пӗр кун хушшинче пӗр танк персе ҫӗмӗрнӗ, 2 оруди, 7 пулемет пӗтерсе тӑкнӑ тата 150 гитлеровеца вӗлернӗ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре Н-ски чаҫӑн артиллерийӗпе миномечӗсенчен персе, 3 дзота тата 3 станковӑй пулемета пӗтерсе тӑкнӑ, противникӑн пехотине пӗр батальон таран сапаласа янӑ. Пострелич юлташ командир пулса тӑракан чаҫри снайперсем 34 гитлеровеца пӗтерсе тӑкнӑ. Вязмин юлташ командир пулса тӑракан чаҫри снайперсем 57 нимӗҫе вӗлернӗ. Пирӗн зенитнӑй артиллери нимӗҫсен 2 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн войскӑсем активлӑн кӗрешнӗ. Дергунов юлташ ертсе пыракан танкистсем нимӗҫсен 21 танкне, 2 бронемашинине, 12 противотанковӑй орудине вӗсен расчечӗсемпе пӗрлех пӗтерсе тӑкнӑ тата 300 гитлеровеца ҫити вӗлернӗ. Ҫав ҫапӑҫура пӗр танкӑн экипажӗ: лейтенант Корниенко, механик-водитель Гуляенко, башня командирӗ Дубинин тата радист Смирнов—нимӗҫсен 5 танкне, 3 противотанковӑй орудине тата 4 автомашинине пӗтерсе тӑкнӑ. Лейтенант Семусенко ертсе пыракан танк экипажӗ тӑшманӑн 3 танкне пӗтерсе тӑкнӑ. Старшина Амбушинов ертсе пыракан боецсен ушкӑнне противникӑн танкӗсем ҫавӑрса илнӗ пулнӑ. Амбушинов юлташ нимӗҫ танкӗ ҫине сиксе хӑпарнӑ та, люкне уҫса, унта граната пӑрахнӑ. Нимӗҫсен танкӗ сирпӗнсе кайнӑ, унӑн экипажӗ вилсе пӗтнӗ.

* * *

Туапсерен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехри темиҫе участокра гитлеровецсем темиҫе хутчен атакӑланӑ. Пирӗн боецсем тӑшмана хӑйӗн малтанхи позицийӗсем патне хӑваласа янӑ. Пӗр высота районӗнче Кузьмин юлташ ертсе пыракан боецсем вирлӗн контратака туса, противника чылай пысӑк ҫухату тӳстернӗ. Нимӗҫсен 200 салтакпа офицера ҫити вилнӗ. Пирӗн зенитнӑй артиллери оборонӑн малти хӗрри тӗлӗнче нимӗҫсен 3 самолетне персе ӳкернӗ. Унсӑр пуҫне, пирӗн летчиксем сывлӑшри ҫапӑҫусенче противникӑн 2 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Воронеж районӗнче икӗ енӗ те пӗр-пӗрин ҫине сайра-хутран артиллерипе тата минометсемпе персе тӑнӑ. Дмитриев юлташ ертсе пыракан оруди расчечӗ нимӗҫсен 2 дзотне ҫӗмӗрнӗ тата тӑшманӑн пехотине пӗр взвод таран вӗлерсе пӗтернӗ. Красноармеецсем Бандура тата Кузнецов юлташсем противникӑн ҫӗмӗрнӗ танкӗ патне, пирӗн позицисемпе нимӗҫсен позицийӗсем хушшинче чарӑнса ларнӑскер патне, траншея чавса тухнӑ. Хӑюллӑ боецсем ҫав танкӑн гусеницисем хушшине противотанковӑй пӑшал вырӑнаҫтарса лартнӑ та унпа персе кункаҫа противникӑн 8 огневой точкине пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Сумы облаҫӗнчи партизансен отрячӗ октябрь уйӑхӗнче нимӗҫсен халӑх пурӑнакан виҫӗ пунктри гарнизонне тапӑннӑ. Хаяр ҫапӑҫусенче партизансем нимӗҫсен фашистла захватчикӗсене 200 ҫынна ҫити вӗлернӗ, 2 бронемашинӑна пӗтерсе тӑкнӑ, боеприпассен виҫӗ складне сирпӗнтерсе янӑ тата трофейӑсем тытса илнӗ.

Нимӗҫсен фашистла ирсӗрӗсем Сталинград облаҫӗнчи Белянски хуторти мирлӗ ҫынсене 150 ҫынна ытла персе вӗлернӗ. Урса кайнӑ бандитсем хӗрарӑмсемпе ачасене тата стариксене картишсене хӑваласа кӗртнӗ те вӗсене автоматсемпе пере-пере вӗлернӗ. Чӗрӗ юлнӑ хресченсене гитлеровецсем оборона сооруженийӗсем тума малти позицисене илсе кайнӑ.

* * *

Квислинговецсен лагерӗнче харкашупа хирӗҫӳ ҫивӗчленнӗҫемӗн ҫивӗчленсе пыраҫҫӗ. Осло хулинче Норвегири эсэсовецсен пӗр ушкӑнӗ Совет Союзӗпе Германи хушшинчи фронта кайма килӗшмен. Эсэсовецсем Квислингӑн министрне Фугльсанга, Квислингӑн личнӑй адъютантне Лангли капитана тата Норвегин фашистла ытти пуҫлӑхӗсене хӗнесе пӗтернӗ. Ҫапла пӗлтереҫҫӗ: конфликт тавраш ан пултӑр тесе, Квислинг хӑйпе пӗр каварлӑ ҫынсене пӗр вӑхӑта обществӑллӑ вырӑнсене ҫӳремесӗр пурӑнма сӗннӗ.

Ноябрӗн 14-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Ноябрӗн 14-мӗшӗ ыран тепӗ чух ҫӗрле пирӗн войскӑсем противникпа **Сталинград** районӗнче, **Туапсерен** ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре тата **Нальчикран** кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре ҫапӑҫнӑ.

Ытти фронтсенче нимӗнле улшӑнусем те пулман.

* * *

Сталинград районӗнче противник пехотӑн икӗ полкран ытларах вӑйӗпе хулан заводсем вырнаҫнӑ пайӗнче пирӗн позицисене темиҫе хутчен те атакӑланӑ. Пирӗн войскӑсем тӑшманӑн атакисене сирсе пӑрахнӑ, халӗ ӗнер нимӗҫсем кӑшт маларах куҫма пултарнӑ участока каялла тавӑрассишӗн ҫапӑсаҫҫӗ. Ӗнер кун каҫиччен пирӗн боецсем нимӗҫсен салтакӗсемпе офицерӗсене 950 ҫынна ҫити вӗлерсе пӗтернӗ, противникӑн 8 танкне, 24 автомашинине, 8 орудине, 19 минометне, 18 пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ, 5 дзочӗпе блиндажне ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Нальчикран кӑнтӑр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн войскӑсем активлӑн ҫапӑҫса противникӑн темиҫе позицине йышӑнса илнӗ. Танксен Н-ски подразделенийӗ нимӗҫсен 6 танкне, 2 орудине пӗтерсе тӑкнӑ тата 150 гитлеровеца вӗлерсе пӗтернӗ. Боецсем Саламатин, Ларин, Кудрянов тата Терентьев юлташсем икӗ кун хушшинче тӑшманӑн 2 танкне, 15 автомашинине ҫӗмӗрсе е ҫунтарса янӑ. Снайпер Горбус ҫав вӑхӑт хушшинчех 15 гитлеровеца вӗлернӗ. Сывлӑшри ҫапӑҫусенче тата зенитнӑй артиллери пенипе нимӗҫсен 8 самолетне ӳкернӗ, 3 самолетне ҫӗмӗрнӗ.

* * *

Сталинградран ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫнерехре Н-ски чаҫри артиллеристсен вутҫулӑмӗпе тапӑнса нимӗҫсен 11 автомашинине ҫӗмӗрнӗ тата ҫунтарса янӑ, противникӑн пехотине пӗр ротӑна ҫити сапаласа янӑ, пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ. Нимӗҫсем йышӑннӑ халӑх пурӑнакан пӗр пункта пирӗн разведчиксем ҫӗрле ҫӗмӗрсе кӗрсе 30 ҫити гитлеровеца вӗлернӗ, горючи складне вут тивертнӗ, унтан хӑйсен чаҫне пӗр ҫухатусӑрах таврӑннӑ.

* * *

Туапсерен ҫурҫӗр-хӗвелтухӑҫнерехре пирӗн чаҫсем, пӗр участокра противник пехотин ротине ҫапса аркатса, кӑштах малалла куҫнӑ. Трофейӑсемпе штабӑн документӗсене тытса илнӗ. Нимӗҫсен 13-мӗш горно-стрелковӑй полкӗнчи пӗрремӗш батальонран тыткӑна лекнӗ салтаксем хӑйсен батальонӗ пӗтӗмпе тенӗ пекех пӗтни ҫинчен каласа панӑ. Ҫав батальонӑн пӗрремӗш ротинче чӗррӗн икӗ ҫын кӑна тӑрса юлнӑ.

* * *

Калинин фронтӗнче хирӗ-хирӗҫ персе тӑнӑ тата разведчиксем шыраса ҫӳренӗ. Пирӗн разведка тӑвакан ушкӑнсем нимӗҫсен 2 дзотне сирпӗнтерсе янӑ, автомашинӑпа танка ҫунтарса янӑ тата нимӗҫсен 39 салтакӗпе офицерне пӗтерсе тӑкнӑ. Н-ски чаҫри снайперсем кун каҫиччен 75 нимӗҫе вӗлернӗ.

Пирӗн летчиксемпе зенитчиксем икӗ кун хушшинче тӑшманӑн 8 самолетне персе ӳкернӗ.

* * *

Ҫурҫӗр-хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче пирӗн 8 боец, лейтенант Нилов ертсе пынипе, тӑшманӑн тылне кӗрсе кайнӑ. Противникӑн огневой точкисем ӑҫта вырнаҫса тӑнине пӗлсе, разведчиксем ҫавӑн ҫинчен артиллеристсене радиопа пӗлтернӗ. Пирӗн артиллери пенипе нимӗҫсен шултӑра миномечӗсен батарейисене вӗсен прислугисемпе пӗрлех пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Ноябрӗн пуҫламӗшӗнче Орел облаҫӗнче кӗрешекен партизансен виҫӗ отрячӗ пӗрлештернӗ вӑйсемпе нимӗҫсен халӑх пурӑнакан пӗр пунктри гарнизонне тапӑннӑ. Партизансем тӑшманӑн бронемашинине, 2 туппине тата 5 станковӑй пулеметне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫапӑҫура 78 гитлеровеца вӗлернӗ. Орел партизанӗсен ушкӑнӗ нимӗҫсен чугун ҫул ҫинчи 2 эшелонне ӳпӗнтернӗ. Грузсем тиенӗ 3 вагонпа 28 платформа ҫӗмӗрӗлнӗ. Вагонсен ҫӗмрӗкӗ айӗнче нимӗҫсен 40 салтакӗ пӗтнӗ.

* * *

Югослави партизанӗсем Бихач хулине йышӑнса илнӗ хыҫҫӑн оккупантсене хирӗҫ малалла активлӑн кӗрешсе пыраҫҫӗ. Тӑшмана йӗрлесе пырса, партизансем халӑх пурӑнакан вунщар пункта йышӑнса илнӗ. Тӑшманӑн 850 салтакне тата 20 офицерне тыткӑна илнӗ. Партизансем ҫавӑн пекех тата 900 винтовка, станковӑй тата ручной пулеметсем нумай тытса илнӗ.

Сталин юлташ пире ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантарчӗ

Етӗрне районӗнче ӗҫҫыннисем Сталин юлташӑн доклачӗпе приказне пысӑк хавхаланупа кӗтсе илчӗҫ. Етӗрне хулинчи предприятисемпе артельсенче, районри колхозсенче нумай ҫынлӑ митингсемпе пухусем пулса иртрӗҫ. Пур ҫӗрте те аслӑ ҫулпуҫӑн чӑн сӑмахӗ ӗҫҫыннисене ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантарать. Рабочисемпе служащисем, колхозниксем, МТС работникӗсем фронтпа тӑван ҫӗршывшӑн татах та лайӑхрах ӗҫлеме ҫӗнӗ обязательствӑсем илеҫҫӗ.

Сталин ячӗпе тӑракан промартелӗн коллективӗ Сталин юлташӑн сӑмахне итленӗ хыҫҫӑн, ноябрь уйӑхӗнчи плана 110 процент чухлӗ пурнӑҫлама, кашни рабочи нормӑна ирттерсе тултарма пулчӗ.

МТС трактористӗсемпе комбайнерӗсем, Сталин юлташӑн доклачӗ ҫине ответлесе, хӑйсем ӗҫлекен колхозсенче авӑна ноябрӗн 25-мӗшӗ тӗлне ҫапса пӗтерме, ноябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне натуроплата тыррине парса татма, 1942 ҫулӑн 4-мӗш кварталӗнче 18 трактор, 11 сеялка, 16 культиватор, 25 плуг тата комбайнсен моторӗсене пурне те юсаса лартма обязательство илчӗҫ.

Ново-Стрелецкри Буденный ячӗпе тӑракан колхозра Сталин юлташӑн докладне итлеме пухӑва 200 колхозник пухӑнчӗ. Сталин юлташӑн ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума чӗнекен хӗрӳллӗ сӑмахӗсене кашни колхозник ырласа йышӑнчӗ, татах та лайӑхрах ӗҫлеме мобилизациленчӗ. Колхозниксем хӑйсем ҫине ҫӗнӗ обязательствӑсем илчӗҫ. Авӑн ҫапса пӗтерессишӗн, государствӑна тырӑ парса татассишӗн пыракан ҫирӗмкунлӑхра фронтри пек ӗҫлесе колхозниксем пӗтӗм тырпула ноябрӗн 15-мӗшӗ тӗлне ҫапса пӗтерме, ноябрӗн 20-мӗшӗ тӗлне государствӑна пур парӑмсене те татма пулчӗҫ. Паянхи куна колхоз ҫак обязательствӑсене чыслӑн пурнӑҫларӗ.

Колхозниксемпе колхозницӑсем танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 5000 тенкӗ укҫа пачӗҫ, Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем хатӗрлес ӗҫе малалла туса пыраҫҫӗ. Кунсӑр пуҫне Буденный ячӗпе тӑракан колхоз ачасен Етӗрнери ҫуртне шефа илнӗ, апшӗ-амӑшӗсене, тӑванӗсене ҫухатнӑ ачасене колхозниксем тӑванла ӑшшӑн пӑхаҫҫӗ. Вӗсем валли тырӑ, пахча-ҫимӗҫ, сӗт-ҫу, тумтирсем парса тӑраҫҫӗ.

Сталин юлташӑн доклачӗ ҫине ответлесе, районри нумай колхозсем фронтри пек ӗҫлемелли ҫирӗмкунлӑхӑн задачине срокчен пурнӑҫлаҫҫӗ.

Н. ШМЕЛЕВ,

ВКП(б) райкомӗн пропагандӑпа агитаци отделӗн заведующийӗ.

Таварҫавӑрнӑш планне ытлашшипех тултарнӑ

ҪӖМӖРЛЕ. (**Хамӑр корр.**). Чӑвашторг отделенийӗн коллективӗ Октябрь уявӗ умӗнхи ӑмӑртура уйрӑм ӗҫсем енӗпе лайӑх результатсем кӑтартрӗ. Уйрӑмӑнах вӑл таварҫаврӑнӑш планне тултарас енӗпе улшӑнусем турӗ. Ҫапла, сӑмахран, нӗрлешӳллӗ апатланӑвӑн Октябрь уйӑхӗнчи планне 20 кун хушшинчех тултарчӗ.

Таварҫаврӑнӑш планне 6-мӗш номерлӗ магазин та (заведующийӗ Куликова юлташ) йӗркеллӗн тултарса пырать. Октябрьти программӑна вӑл икӗ хута яхӑн ирттерсе тултарчӗ.

Иртнӗ уйӑхра 23-мӗш, 1-мӗш тата 17-мӗш номерлӗ магазинсем те начар мар ӗҫлерӗҫ. Вӗсем кашниех хӑйсене панӑ заданисене ирттерсе тултарчӗҫ.

Черчилль общинăсен палатинче тухса калани

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Черчилль паян общинăсен палатинче сăмах тухса каланă. Манăн Египетри çапăçусем çинчен общинăсен палатине каласа памалла,—тенĕ вăл.—Çав çапăçу вăл—«Англин чи паха çĕнтерĕвĕ» пулса тăрать. Çавăн пекех манăн çав операцин иккĕмĕш çур пайĕ çинчен, уйрăмăнах—Америкăпа Англи войскисем Çурçĕр Африкăна анни çинчен каласа памалла.

«Египетри çапăçусенче,—тенĕ Черчилль,—противник йывăр сухатусем тӳсрĕ. Унăн грузсем турттарса пыракан кашни виççĕмĕш пароходне Англин подводнăй лодкисемпе самолечĕсем тинĕс тĕпне ăсатнă. Германипе Италин тинĕсре çӳремелли ресурсĕсем чи пысăк йывăрлăхсем тӳсеççĕ.

Противникăн хăйĕн авиацийĕн ытларахăш пайĕпе пĕтĕмĕшпех хăйĕн çарĕ валли продовольствипе боеприпассем тата горючи турттарнă çĕрте усă курма лекрĕ. Унăн авиацийĕн вăйĕсем Российăна хирĕç кĕрешнĕ çĕрте юлашки 3 уйăх хушшинче чылаях хавшарĕç, унăн подводнăй лодкисен Вăтаçĕр тинĕсри активлăхĕ чакрĕ.

Çавтери пысăк вăй хурса кĕрешмелекни тата Африкăри кампани питех те хакла ларни Германипе Италин ресурсĕсен чылай пысăк пайне пушатса хăварчĕç. Çакă вăл тăшман вăйĕсен пĕр пайне тата унăн хаярлăхне Россия çинчен хамăр çинелле куçарттармалли усăллăрах меслетсенчен пĕри пулса тăчĕ».

Союзниксен вăйĕсене тĕрĕс йĕркелесе пырасси çинчен тата географи тĕлĕшĕнчи йывăрлăхсем çинчен чарăнса тăрса, Черчилль çапла каланă: «президент Рузвельт—Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен тухма, Сталин вара—Российăран тухма май çук тесе шутларĕç. Çавăнпа та,—тенĕ вăл,—манăн çав икĕ çĕршыва та хамăн кайса килме лекрĕ, икĕ хутĕнче те манпа пĕрле пысăк çар специалисчĕсем пычĕç, эпир хамăрăн плансене йĕркене кĕртес тесе мĕн май килнĕ таран тимлĕнрех ĕçлеме тăрăшрăмăр. Хальхи вăхăт тĕлне эпир вĕсене майлаштарса хăшпĕр тĕлĕшрен йĕркене кĕртрĕмĕр. Россия пирки каласан, унăн çулйĕрĕпе положенийĕ паллă пулчĕ. Советсен Германия çав тери хăрушла хĕснине сирсе тăма лекрĕ. Советсем хăйсен пĕтĕм вăйĕсене тăшмана хирĕç тăрса кĕрешнĕ çĕре хурăççĕ, вĕсем çапла хӳтĕленсе пырса, пирĕн пĕрлĕхлĕ ĕçе калама çук пысăк пулăшу пачĕç. Вĕсем, Германия юлашки вăрçăра çухатнинчен чылай нумайрах миллион çынна пĕтерсе тăкса е яланлăхах стройран кăларса, çак пулăшăва пачĕç. Сталин хăйĕн юлашки сăмахĕнче Россия çине ӳкнĕ çавтери пысăк йывăрлăхсем çинчен каланин витĕмлĕхне эпĕ пĕтĕмĕшпех йышăнатăп. Российăшăн манăн чĕре юнпа витĕнет. Пурте туйма тивĕçлинех эпĕ те туятăп—эпир пурте унпа пĕрле асапланма тата ун çинчи йывăрлăхсен пĕр пайне сирсе пăрахма хатĕр тăратпăр. Сталин çав пĕр пек мар тивекен йывăрлăх пирки каланисем пурте питĕ тĕрĕс. Анчах, иккĕленмелли çук, Россия халĕ иртнĕ вăрçăринчен сахалтан та виçĕ хут хăватлăрах тата пурнăçлăрах организм пулса тăрать. Ĕненмелле те мар пек—Россия иртнĕ вăрçăра Германин пĕтĕм çарне хирĕç тăма пултарасси пирки шухăшламалли те пулман, анчах халĕ вăл Германия пырса çапнин мĕнпур йывăрлăхне хăй çинче тӳссе ирттерет. Германин нимĕçсем йышăннă мĕнпур çĕршывсенче тытса тăракан вăйĕсем пирки каласан, вĕсем Финляндия, Румыния, Венгрия тата нацистлантарнă е фашистлантарнă ытти çĕршывсем Германие панă дивизисен кĕтĕвĕсемпе ытлашшипе тенĕ пекех витĕнеççĕ. Вырăссем паян кĕрешĕвĕн йывăрлăхне хăйсем çинче тӳссе пыраççĕ, çавăнпа та эпĕ—вĕсем хăйсем енчен тивĕçлипех çавăн пек вăйлă та татăклă заявленисем тунине питех те тĕрĕс тесе шутлатăп. Пирĕн Российăна пулăшмалла пулнă, анчах усăллă та тивĕçлĕ майсемпе пулăшмалла. Эпир вăхăт çитмесĕрех Ла-Манш урлă атака тунă пулсан, эпир пĕр кун хушшинче пĕр дюжина дьепп туса, пĕр-икĕ эрнерен пĕрер мăшăр дюнкерк туяннă пулсан, çакă пирĕн шухăш-кăмăла, тен, çăмăллăх кӳнĕ пулĕччĕ. Анчах та çав йышши обстановка Российăна пулăшман пулĕччĕ. Ла-Манш урлă е Çурçĕр тинĕс урлă тивĕçлĕ те майлă вăхăтра атака тăвасси питех те тĕплĕн хатĕрленме ыйтать, çакна валли войскăсем антарма ятарласа хатĕрленĕ суднăсем нумай йышлăн кирлĕ, тата комбинациллĕ вăрçă валли дивизи хыççăн дивизи ятарласа вĕрентсе хатĕрленĕ чылай пысăк çар кирлĕ. Çакна ăна эпир тăватпăр, анчах çакна тума вăхăт кирлĕ. Противник пĕр-пĕр самантра хавшаса çитни паллă пулнă пулсан, çавăн пек тĕплĕн хатĕрленесси ытлашши кирлех те пулман пулĕччĕ тата хăраса тăмасăрах пысăк ĕçе тытăнма май килнĕ пулĕччĕ, анчах хальхи вăхăтра ĕç, паллах, апла мар тăрать; Германия Франципе, эпир Великобританире тытса тăракан çарсем чухлех, вырăнти оборонăн отрячĕсене шутламасан, пысăк çар тытса тăрать. Çав çара, Англипе Америка войскисем пекех чаплăн хĕçпăшаллантарман тейĕпĕр, анчах унăн ретĕнче вут-çулăм айĕнче пулнă нумай салтаксем, ветеран-офицерсем тата вуншар çĕршывсене çапса аркатнă çĕре хутшăннă салтаксем пур. Противникăн çав çарне хальхи вăхăтри хĕçпăшалпа хĕçпăшаллантарнă. Вăл Ла-Маншпа Çурçĕр тинĕс çыранĕсем тăрăх туса тухнă çавтери хăватлă укрепленисен хӳттинче тăрать. Кусемсĕр пуçне, тинĕсрен десант антарассипе тата çав вăхăтрах противник хирĕç тăрассипе çыхăннă питех те пысăк та уйрăм йывăрлăхсем пур. Çавăн пек ĕçе хатĕрленсе çитмесĕрех тума хăтланни вăл пирĕн енчен питех те ăссăр ĕç туни пулĕччĕ. Хатĕрленес ĕç чылай малалла кайрĕ. Пирĕн мĕнпур портсенче, ăста кирлĕ, çавăнта пур çĕрте те, çавтери вăйлă сооруженисем туса лартнă тата тăватпăр та. Анчах та çакă вăл çителĕксĕр-ха, пире çакăн пек хатĕрленнипех 1942 çулти çуллахи е кĕркуннехи вăхăтра континент çине ăнăçлăн çĕмĕрсе кĕме нихăçан пулĕччĕ. Обществăллă шухăш енчен е ытти енчен кирек мĕнле хĕсни те мана, тĕп ответлăха тытса тăракан çынна, пирĕн çар советникĕсем каласа ĕнентернĕ тăрăх пысăк инкек патне илсе пыма пултаракан операцие тума нихăçан пулăшмасан пулĕччĕ.

Манран çапла ыйтаççĕ: мĕншĕн эсир вырăссене тĕрĕс мар шанчăк парса тăтăр? Мĕншĕн эсир, Пĕрлешӳллĕ Штатсемпе тата Российăпа калаçса татăлса, Европăра иккĕмĕш фронт уçасси пирки тата 1942 çулта уçасси пирки калакан коммюникене патăр?—теççĕ. Манăн уççăнах çакна каламалла: эпир çак тĕлĕшпе хамăрăн халăхăн шухăшне те вăхăтлăха пăтраштарнă пулин те, тăшмана улталани пĕтĕмĕшпех тӳрре тухрĕ тесе шутлатăп эпĕ.

Нихăçан та тума юраман пĕр япала пур—çакă вăл хамăрăн союзнике улталама юраманни. Хăвăр пурнăça кĕртме пултараймастăр пулсан, нихăçан та сăмах пама юрамасть. Эпĕ çакна шанса тăратăп: Россия тĕлĕшпе çырусем урлă е авторитетлă представительсемпе калаçнă чухне Англия хăй çине илнĕ мĕнпур обязательствăсене пурнăçа кĕртсе пырса, эпир яланах çав принципа çирĕп тытса пынине кăтартса парăпăр. Июнь уйăхĕнче эпĕ Российăна çырулла документ патăм. Унта уççăнах çапла каланă: эпир 1942 çулта континент çине войскăсем антарма ĕмĕтленетпĕр пулин те, çакна пурнăça кĕртес тĕлĕшпе кăçалах сăмах пама пултараймастпăр, тенĕ. Анчах та эпир континент çине августра е сентябрьте тапăнса кĕме шутланипе шутламаннине пăхмасăрах, тăшман эпир çак ĕçе тума хатĕрри çинчен тата ăна пурнăça кĕртме ĕмĕтленни çинчен шухăшласа тăни Российăшăн питех те кирлĕ пулнă. Çапла майпа кăна эпир нимĕçсене хăйсен вăйĕсене Калере тата Франципе Голланди çыранĕсем çинче ытларах пухса тăраттарма пултартăмăр.

Эпир нимĕçсене хĕвеланăçĕнче сахалтан та Германин 33 дивизине пухса тăраттартăмăр. Германин истребительнăй авиацийĕн виççĕмĕш пайĕ хĕвеланăçĕнче тăрать, унпала вăл усă кураймасть; вăл бомбардировщиксен чылай пысăк йышне, унпала пире атакăлас ĕçре усă курмасăр, тытса тăратать. Мĕншĕн? Мĕншĕн тесен, эпир çыран çине пырса кĕрессинчен сыхланса, çав самолетсене унăн резервра тытма лекет. Пире хирĕç, Çывăхри Хĕвелтухăçĕпе Мальтăна пĕрле илсессĕн, Германин мĕнпур истребительнăй авиацийĕнчен çурри ытла çапăçать. Кунсăр пуçне Германин 10 дивизийĕ Норвегире тăрать. Германи флочĕн ытларахăш пайĕн темиçе уйăх хушши ĕнтĕ çурçĕрти фиордсенче тăма лекет. Российăна каякан пирĕн караваньсене чăрмантарас тесе, нимĕçсем инçетри çурçĕрте хăйсен чи лайăх самолечĕсене 350 самолета яхăн тытса тăраççĕ. Унта иккĕмĕш фронт, çав фронта тытса тăрасси пире хакла ларать. Российăна каякан караваньсен 19 экспедицийĕнчен кашниех тинĕс çинчи питех те паха операци пулнă, мĕншĕн тесен тăшман флочĕн тĕп вăйĕсем унта пачах çывăхра тăраççĕ. Юлашки караван, снабжени парса тăма кирлĕ суднăсене шутламасăр, 77 çар карапне йышăнчĕ».

«Великобритания 1942 çулта промышленноçра, тинĕспе çар ĕçĕнче вăй хурса ĕçлени мĕнпур англичансем кăна мар, вăл çавăн пекех пирĕн хĕвеланăçĕнчипе хĕвелтухăçĕнчи союзниксем те тивĕçлĕ вырăна хурса мухтанмалли ĕç пулса тăрать»,—тенĕ малалла Черчилль.

«Эпĕ Вашингтона малтанхи хут кайнă чухне президент Рузвельт—Америка войскисене антарма Францин Çурçĕр Африкине ятарласа уйăрса хумалла тесе шутлатчĕ. Эпир çав шухăшпа пĕтĕмĕшпех килĕшрĕмĕр. Анчах Англин те, çавăн пекех Пĕрлешӳллĕ Штатсен те иккĕленмелли çук тивĕçĕ çакăнта пулса тăрать: Франци ирĕке кăларас шутпа унта десант антарса, Российăна тӳррĕнтерех пулăшас ĕçре пур майсемпе те усă курмалла. Çав икĕ проекта та тĕплĕн тĕпчесе тухнă, унтан вара çав икĕ ĕмĕте е пĕр вăхăтрах, е хăшне те пулин пĕрине малтан пурнăça кĕртес тĕлĕшпе тивĕçлĕ хатĕрленӳ туса ирттернĕ. Эпĕ хам яланах Хĕвеланăç фрончĕ пĕр пĕтĕм фронт пулса тăма тивĕçлĕ тесе шутланă.

Эпир тăшмана Франци çыранĕсем çинче питех те пысăк вăйсем тытса тăраттаратпăр тата тăшмана пырса çапма хатĕрленес ĕç пирĕн эрнерен эрненех аталанса, вăйланса пырать. Çакăнпа пĕрлех эпир Вăтаçĕр тинĕс çинче хальхи анлă та нумай çĕр талккишне çавăрса илекен утăма турăмăр. Çав утăмăн тĕллевĕ—пурнăçра пысăк вырăн йышăнса тăракан тинĕс çинче пуç пулса тăрассине хамăр алла тавăрасси, çавăн пекех тата тĕнĕлĕн чи витĕмсĕр вырăнне, уйрăмăн илсен Италие, вăйлăн атакăласси пулса тăрать. Вăрçă пуçланнăранпах çакă вăл чи тĕрĕс стратеги вырăнче туйăнса тăратчĕ. Вăтаçĕр тинĕс çинчи фронта туса хуни, Атлантика океанĕ çинчи е Ла-Манш çинчи фронта туса хуни пекех, пире маневрсем тĕлĕшпе пысăк ирĕклĕх кӳме пултарать. Пирĕн тинĕс çинчи хăват тата пирĕн тип çĕрпе тинĕс çинчи пĕрлештернĕ вăйсем майĕпен аталанса пыни икĕ операцие те питĕ анлă масштабпа туса ирттерме май парать. Эпир противника хăйĕн вăйĕсене Франци çыранĕсем çинче пухса тăраттарма тата унăн Кăнтăрти фронтне—Çурçĕр Африкăна атакăлама шут тытрăмăр. Англипе Америка генеральнăй штабĕсем çак решение пĕтĕмĕшпех пĕр шухăш-кăмăллă пулса йышăнчĕç, тата вĕсен шухăшне США президенчĕпе Англин çар кабинечĕ те килĕштерчĕ.

Çурçĕр Африкăри экспедицин чи паллă пайĕ вырăнне хурса, Англин 8-мĕш армийĕ валли тивĕçлĕ условисем туса пани кирлĕ пулчĕ, çакна ăна 8-мĕш арми пуçарулăха хăйĕн аллине тытса илсе Египетри наступление çĕнетсе яма пултартăр тесе, çапла тума кирлĕ пулчĕ. Килекен хыпарсем тăрăх, 8-мĕш армири лару-тăрупа эпĕ питех те çырлахман пирки тата 8-мĕш арми верховнăй командование шанса тăнине ĕнесенех çитереймен пирки, эпĕ, хампа пĕрле империн генеральнăй штабĕн начальникне сэр Алан Брука илсе, Египета тухса кайрăм.

Çавăн пек каясси вăл тата çакăн пирки те питĕ кирлĕ пулчĕ: эпĕ сире каланăччĕ, совет правительствине эпир 1942 çулта Ла-Манш урлă атака тăвас тĕлĕшпе сăмах пама пултараймастпăр тесе пĕлтертĕмĕр пулин те, эпир çав операцие тăвас çул çинче тăракан йывăрлăхсене çĕнтермешкĕн хамăрăн вăй çитнĕ таран пурне те тума хатĕр тăни çинчен пĕлтермелле пулчĕ; эпир çав ĕçе 1942 çулти кĕркунне тума шутламанни çинчен решени йышăнтăмăр пулсан, ун вырăнне Çурçĕр Африкăра анлă атака тума решени йышăнтăмăр пулсан, çаксем çинчен пурин çинчен те Сталина пĕлтерме кирли тухса тăчĕ. Эпĕ çак ыйтупа, яланхи пек дипломатиллĕ калаçусем туса ирттернипе чарăнса ларас вырăнне, куçа-куçăн тăрса калаçсан лайăхрах пулать тесе шутларăм. Эпĕ общинăсен палатине çакăн çинчен шантарса калатăп: эпĕ çав аслă çынпăн ăсĕпе усă кăмăлне çирĕппĕн ĕнӗнетĕп, эпĕ унта илсе пынă хыпарсене хаваслăн кĕтсе илмерĕç пулин те, тата, вырăссен шухăшĕпе, вăл хыпарсем мĕнле пулма тивĕçлĕ пекех пулмарĕç пулин те, эпир пĕр-пĕринчен лайăх туссем пулса уйăрăлтăмăр, Сталин сăмахĕсемпе каласан, эпир пĕрпĕрине пĕтĕмĕшпех ăнланса илтĕмĕр. Çакă ĕнтĕ вăл çирĕп факт пулса тăчĕ.

Хăйсем кĕтни пурнăçа кĕменнине вырăссем çирĕппĕн тӳссе ирттерчĕç. Вĕсем тăшмана хирĕç вăйлăн тăчĕç, халĕ ĕнтĕ, хăйсем çине тăрса ыйтнă пулăшăва эпир пама пултараймарăмăр пулин те, вĕсем хĕллехи тапхăра ăнăçлăн кĕчĕç. Çав пулăшăва пирĕн вăй çитнĕ пулсан, эпир вĕсене кăмăлласах панă пулăттăмăр».

Премьер-министр Египетшăн пыракан çапăçусенче икĕ енĕ те тӳснĕ çухатусем çинчен çапла пĕлтернĕ: «Александер генерал шутласа тухнă тăрăх,—вăл сведенисене эпĕ ĕнер каçхине илтĕм,—нимĕçсемпе итальянецсене пĕтĕмпе 59 пин çынна вĕлернĕ, амантнă е тыткăна илнĕ, вĕсенчен нимĕçсем 34 пин çын, итальянецсем 25 пин çын. Ытти нумай итальянецсем пушхирте çухалса çӳреççĕ пулмалла. Тăшманăн кунта 500 танк, тĕрлĕ йышши 1.000 тупă пĕтнĕ. Пирĕн çухатусем, вĕсем пысăк та йывăр пулин те, задача мĕн пек йывăррине шута илсен, вĕсем ытлашши пысăках мар. Пирĕн пĕтĕмпе офицерсемпе унтер-офицерсем тата салтаксем 13.600 çын пĕтнĕ».

Черчилль малалла çапла каланă: «Тăшмана йĕрлесе пыракан пирĕн войскăсем çавтери хăвăрттăн малалла куçаççĕ, çав хăвăртлăх вăл халиччен Египетри çапăçу хирĕнче войскăсем куçнă хăвăртлăхсенчен пуринчен те иртсе каять. Египета противникран тасатнă та ĕнтĕ; эпир Киренаика патнелле куçса пыратпăр. Халĕ противникăн тĕп вăйĕсене çапса аркатнă чухне, пирĕн генералсемпе пирĕн авиаци тĕлĕнмелле ĕçсем тăвĕç тесе шанса тăма пултаратпăр эпир. Египетри çапăçăва историллĕ çĕнтерӳ тесе хакламалла, çав çĕнтерĕве палăртас шутпа, ноябрĕн 15-мĕшĕнче, вырсарникун, мĕнпур çĕршывĕпе чан çапма хушнă».

Черчилль малалла çапла каланă: «Халĕ мĕн пулса пырать-ха? Америкăпа Англи войскисем Çурçĕр Африкăна пырса кĕни пирки çак ĕçпе интересленекен тĕрлĕ çĕршывсенче мĕнле хускану пулса иртессине эпир, паллах, курса тăратпăр. Çакă вăл чи малтан Италие пырса тивет. Халĕ ĕнтĕ вăл вăрçă мĕне пĕлтернине тата противника çĕре çапса ӳкернĕ пекех туйăннă чухне вăрçа хутшăнни мĕн тери ăслă мар ĕç пулса тăнине тĕплĕрех те лайăхрах ăнланса илме тытăнать.

Шăматкун эпĕ çакăн çинчен калакан хыпарсем илтĕм: Гитлер, перемири условийĕсене пăсса, мĕнпур Франци территорине оккупацилеме шутлать. Çав перемири условийĕсене Виши правительстви çавтери тимлĕн, хĕрхенме тивĕçлĕ пек тимлĕн пурнăça кĕртсе пычĕ, çавна пула вăл хăйĕн суднисене те çухатрĕ, çавна пулах ĕнтĕ Франци пулăшма пыракан Америка суднисем çине пеме пуçланă француз моряксем хăйсен тиранĕсемшĕн-нимĕçсемшĕн пĕтрĕç. Мĕнпур французсен, француз ятне тивĕçлĕ мĕнпур çынсен, пĕрлешмелли тата пĕтĕм шухăш-кăмăлпа чăннипех пĕрлĕхлĕ пулмалли самант çитрĕ. Вĕсем çул çинче нумай йывăрлăхсемпе асап-хĕн-хурсем тĕл пулĕç, уйрăм çынсене тӳсме лекекен инкексем, паллах, питех те пысăк пулĕç. Мĕнпур французсен пĕр-пĕринпе хирĕçессине тата пĕр-пĕрин пирки кĕвĕçессине пăрахмалли самант, генерал де Голль пек, тăван çĕршыва ирĕке кăларасси çинчен шухăшламалли самант çитрĕ. Анчах манăн халĕ общинăсен палатине тӳрех çапла калама лекет: Францире мĕн пулса иртни çинчен калакан çителĕклĕ информаци хальхи вăхăтра ман алăра çук, кашни сехетрех парса тăракан пĕлтерӳсем çумне эпĕ нимĕн те хушма пултараймастăп».

«Палата çакна шанса тăма пултарать,—тенĕ юлашкинчен Черчилль,—çывăхри темиçе кун хушшинче нумай событисем пулса иртĕç, эпĕ Çурçĕр Африкăра, Францире е Италире мĕнле событисем пуçланса каясси пирки калама хăтланнă пулсан, эпĕ чуххăмăн кăна каланă пулăттăм. Эпĕ çакна çеç калама пултаратăп: Итали çине бомбăсем пăрахмалли майсем пирĕн татах та ытларах пулĕç. Событисем хĕрсе пынă самантра каласа пама пултарнă таран эпĕ сире тĕплĕ отчет патăм. Çав событисем пирĕн ĕçшĕн ырă пулчĕç. Анчах эпир хамăрăн кĕрешĕве вăйсăрлатмасан кăна савăнма пултаратпăр. Çĕнтерӳ ыйтăвĕсем поражени ыйтăвĕсенчен кăмăллăрах, анчах вĕсем çăмăлах мар. Пуçарулăха хамăр алла тытса илме тăрăшнă чухне пирĕн нумай йывăр лару-тăрусемпе, нумай хăрушлăхсемпе, нумай йăнăшсемпе тата хурлăхсемпе тĕл пулма лекет. Çĕнтерĕве пула хавхаланса çĕкленнĕ хастарлăхпа пирĕн хамăрăн вăйсене ӳстернĕ çĕрте, хамăрăн системăна çĕнетнĕ çĕрте тата хамăрăн меслетсене малалла лайăхлатса пынă çĕрте усă курмалла. Çапла тусан кăна, общинăсен палати пĕр иккĕленмесĕр пулăшса пырсан кăна, эпир хамăрăн задачăна пурнăça кĕртме малалла кайăпăр».

ГЕРМАНИПЕ ИТАЛИ ВОЙСКИСЕМ ФРАНЦИН ОККУПАЦИЛЕМЕН ПАЙЕ ТАРĂХ КУÇСА ПЫНИ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: Италин оккупациллĕ войскисем Францин кăнтăрти пайĕнче ларакан Кан хулине пырса çитнĕ. Савойăра итальянецсем Шамбериреп 40 километрта ларакан Пон-Рояль патнелле куçса пыраççĕ. (Пон-Рояль вăл демилитаризованнăй зонăн хĕрринче ларать).

Германи войскисем Францин кăнтăрхĕвелтухăçĕнчи пайĕнче, тинĕс-хĕрринче Рона шывĕн икĕ енĕпе выртакан гайонри стратегиллĕ пунктсене оккупациленĕ.

Нимĕç чаçĕсенчен пĕри Лиможран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Перигĕ хулине пырса кĕнĕ.

ГЕРМАНИ ВОЙСКИСЕМ ФРАНЦИПЕ ИСПАНИ ЧИККИНЕ ПЫРСА ÇИТНĔ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 12-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Германи войскисем Францие Испани чиккине пырса çитнĕ, вĕсем Испанин Уэсха провинцийĕнчен çурçĕртерехре вырăнасса тăнă.

ВИШИРЕ СЫВЛĂШРАН ТАПАННИ ÇИНЧЕН ПĔЛТЕРНĔ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Вишири радиостанци çапла пĕлтернĕ: паян Вишире икĕ хутчен сывлăшран тапанни çинчен пĕлтернĕ. Противник çывăхри аэродрома тапаннă.

ВИШИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ГЕРМАНИ ВОЙСКИСЕМ ТУНИСА ПЫРСА АНМАН ТЕСЕ ПĔЛТЕРЕТ

ЛОНДОН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви каланă тăрăх, Вишири радио паян тепĕр хут çапла пĕлтернĕ: нимĕçсем Туниса тинĕс енчен е сывлăшран пырса кĕме хăтланман, тенĕ.

Ютçĕршывсенче

Çурçĕр Африкăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе çапла пĕлтереççĕ: 8-мĕш арми, Киренаика урлă каялла чакса пыракан противника хăваласа пырса, Тобрука тата Бардие тытса илнĕ. Çĕнĕрен тыткăна илнисем пур.

Союзниксен авиацийĕ Тобрукпа Эль-Газала хушшинче тăшманăн темиçе грузовой суднине путарнă.

Тунисри аэродромсем çине бомбăсем пăрахса, çĕр çинче противникăн 19 самолетне пĕтерсе тăкнă, нумай самолетне сиенленĕ. Вăтаçĕр тинĕс çинче Англи истребителĕсем Италин 6 транспортнăй самолетне персе ӳкернĕ, вĕсем Германи войскисене çурçĕрелле турттарнă пулнă. Тобрукран хĕвеланăçнерехре союзниксен авиацийĕ аялтанах вĕçсе пырса Роммелĕн каялла чакакан войскисем çине пенĕ. Противникăн самолечĕсем çапăçусем пыракан пĕтĕм районри англичансене сахал хирĕç тăраççĕ.

ЛОНДОН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян ирхине Америкăн йышлă вăйĕсем Тунис чиккинчен инçех мар ларакан Бон хулине йышăнса илнĕ.

Çар производствин министрĕ Литтлтон каланă тăрăх, Çурçĕр Африкăна войскăсем илсе пырса антарас ĕçре 500 судно ытла ĕçленĕ, вĕсене 350 çар карапĕ ытла хуралласа пынă. Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, противник Туниса транспорт самолечĕсемпе 500—600 салтакпа офицерсем ытла илсе пырайман пуль тесе шутлаççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, Америка войскисем Ливири Бенгази гаваньне тата Крит утравĕ çинчи Кандие икĕ хутчен тапаннă. Противникăн нумай автомашинине çунтарса янă.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ÇУРÇĔР ФРАНЦИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 11-мĕшĕ. (ТАСС). Авиаци министерстви çапла пĕлтерет: ĕнер кăнтăрла «Бостон» йышши бомбардировщиксем, Англи истребителĕсемпе союзлă çĕршывсен истребителĕсем хӳтĕлесе пынипе, Гаври доксем çине бомбăсем пăрахнă. Истребительсен ытти эскадрилйисем Шербур районĕсене тапаннă. Çав операцисене 200 истребителе яхăн хутшăннă. Противник хирĕç тăман.

ЛАПКА ОКЕАНРИ ВĂРÇĂ

МЕЛЬБУРН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен войскисем Çĕнĕ Гвинейăра Оиви тата Горави районĕсене японецсенчен тасатнă, японецсене унта пысăк çухатусем тӳстернĕ. Трофейăсем тытса илнĕ тата тыткăна илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ Японин Соломон утравĕсем çинчи Буин Файси патĕнчи базине тапаннă. Бомбăсем çар хатĕрĕсем турттаракан 4 суднăна бомбăсем лекнине палăртнă. Гвадалканар çинче сывлăшра пулса иртнĕ çапăçусенче японецсен 17 самолетне персе ӳкернĕ.

• • •

Китай командованийĕ аллинчи даннăйсем тăрăх, японецсем Шаньдунь провинцийĕн кăнтăр пайĕнче Исянь тăвĕсем хушшинче наступлени пуçласа янă, унта хаяр çапăçусем пуçланса кайнă. Китай войскисем японецсене хирĕç контратакăсем тăваççĕ, чылай чухне вĕсене вăйлă пыра-пыра çапаççĕ. (ТАСС).

ШВЕЦИ ÇАРĔН МАНЕВРĔСЕМ

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Швецин кăнтăрти пайĕнче, Вермланд провинцийĕнче, Швеци çарĕн кĕркуннехи маневрĕсем пуçланнă. Войскăсем вĕрентÿ çĕре çар командующийĕ Хольмквист тата кавалери инспекторĕ Пейрон тухса кайнă. Маневрсенче пехота, кавалери, авиаци тата танковăй чаçсемпе моточаçсем пулаççĕ.

КАИР, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта тыткăна лекнĕ 30 пин итальянецпа илсе килнĕ, вĕсем хушшинче 9 итальянец генералĕ пур.

ДАРЛАН ФРАНЦИ ФЛОЧĔН КОМАНДНĂЙ СОСТАВНЕ ЧĔНСЕ КАЛАНИ

ЛОНДОН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: адмирал Дарлан Тулонра тăракан Франци флочĕн командный составне радиопа чĕнсе каланă, вăл унти карапсене Çурçĕр Африкăна илсе пыма е вĕсене нимĕçсем тытса илме пултаракан вырăнтан илсе кайма чĕннĕ.

Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, çапăçакан Францин руководителĕсем Франци флочĕ хăйне Гитлер тытса илесрен сыхлĕ тесе ĕненсе тăраççĕ. Çапла çирĕплетсе калаççĕ: Тулон патĕнче тăракан Германи войскисем Тулон портĕнче тăракан тинĕс-çар карапĕсене хирĕç операцисем тума хатĕрленеççĕ.

ГЕРМАНИН ПЕРЕМИРИ КОМИССИЙĔН ЧЛЕНĔСЕНЕ ТЫТКĂНА ИЛНĔ

ЛОНДОН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕн официальнăй представителĕ çапла пĕлтернĕ: Çурçĕр Африкăра Германин перемири комиссийĕн членĕсене нумайĕшне тыткăна илнĕ, тенĕ.

ФРАНКО РУЗВЕЛЬТА ОТВЕТ ПАНĂ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Рузвельт хăй Франко генералтан çырлахтаракан ответ илни çинчен каланă.

ГРЕЦИРИ ПАТРИОТИЗМЛĂ ÇĔКЛЕНӲ

ЛОНДОН, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). «Таймс» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 28-мĕшĕнче, Италия Грецие тапăнни икĕ çул çитнĕ кун, Афинăри халăх пĕтĕмпе тенĕ пекех урамсене тухнă, вăл «Ирĕклĕх парăр!» тесе кăшкăрнă. Демонстрантсем паллă мар грек салтакĕн памятникĕ çине хума чечексем илсе пынă. Итали полицийĕн пысăк отрячĕ демонстрацие пусарса лартма хăтланса пăхнă та, анчах пусарайман.

Пĕтĕм Грецийĕпе вăйлă патриотизмлă çĕкленӳ палăрать. Афинăра полици демонстрантсене хирĕç пăшалпа та усă курнă. Темиçе çынна вĕлернĕ, 50 çынна амантнă.

ФИНСЕН ФАШИСТЛА ОККУПАНЧĔСЕН ТИСКЕРЛĔХĔСЕМ

СТОКГОЛЬМ, ноябрĕн 13-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, финн влаçĕсем оккупациленĕ совет районĕсенчи халăхсене питех те тискеррĕн тыткалаççĕ. Финсем тытса илнĕ пĕр хулара çар складне вут тĕртсе çунтарнă пулнă. Финсем çав хулара 105 çынна арестленĕ, вĕсем хушшинче хĕрарăмсем те нумай. Каярахпа вĕсене пурне те персе вĕлернĕ. Çавăн пек массăллăн персе вĕлересси темиçе хут та пулнă. Çав хулари чĕрĕ юлнă мĕнпур халăха халĕ концентрациллĕ лагерьсене янă.

Концентрациллĕ лагерьсенче пурнăç условийĕсем калама çук начар. Пĕр лагерьте 10 пин çынна яхăн асапланса пурăнать. Кашни уйăхра унта выçăпа тата чирлесе çĕршер çын вилет.

ХРОНИКА

Петр Васильевич Васильков юлташа Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн 1942 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, Чăваш АССР Вырăнти Промышленность Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Дирекция и сотрудники Чувашторга и Чебторга с прискорбием извещают о смерти сотрудника, юрисконсульта СПИРИДОНОВА Николая Спиридоновича.

ЧУВАШСКИМ ОТДЕЛЕНИЕМ ГЛАВАПТЕКОУПРАВЛЕНИЯ с 1-го ноября 1942 г. организованы сдаточно-скупочные пункты для приема и скупки от населения годного к употреблению или ремонту медицинского инструментария и медоборудования в следующих пунктах: г. Чебоксары, улица Карла Маркса, дом № 4, МАГАЗИН САНГИГИЕНЫ; г. Алатырь, улица Ленина, дом № 46, Аптека № 1.
ЧУВАШСКОЕ ОТДЕЛЕНИЕ ГЛАВАПТЕКОУПРАВЛЕНИЯ. 3—2

СТАНЦИЯ ПЕРЕЛИВАНИЯ КРОВИ в неограниченном количестве принимает доноров всех групп.
Адрес: Чувашская ул., дом 22.

ПРОПАЛА ЛОШАДЬ: мерин, гнедой масти, 16 лет. Нашедшего просим сообщить по адресу: г. Чебоксары, ул. Ленина, № 6, „Чувашпромсков“. 3—1

1 ноября в г. Чебоксарах пропала кобыла, карей масти, принадлежащая колхозу „Комбинат“, Октябрьского района.

Особое проектно-монтажное Управление № 5 „Центроэлектромонтаж“, участок № 6
в гор. Чебоксарах производит набор учеников на курсы электромонтеров.
На курсы принимаются мужчины и женщины в возрасте от 15 до 35 лет.
Курсанты обеспечиваются стипендией в размере 150—200 руб. в месяц.
Обращаться: Чувашская ул. д. № 66, поселок Водосвета, „Центроэлектромонтаж“ (около продуктового ларька Водосвета). 2—2

Чувашпотребсоюзу для работы в Чебоксарах требуются инструктора по общественному питанию и хлебопечению, агроном, зоотехник и бухгалтера.
Обращаться: Театральная, 1/5.

Чувашской республиканской конторе „Госсортфонда“ требуются для работы в гор. Чебоксарах и в районах следующие работники: старший агроном (республиканской конторе), заведующие сембазами, заведующие пунктами, ст. бухгалтера сембаз, механики.
С предложением обращаться по адресу: гор. Чебоксары, ул. Ленина, д. № 30, Чувашская контора „Госсортфонда“. 2—1

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОН СЕМ: редакторĕн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропаганда парти пурнăç пайĕн — 3—93, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 1103 Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.